# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# Кашни ачан ăнăçлă аталанма май пур

***Раççейре «Образование» наци проекчĕ пурнăçланни кашни ачана ăнăçлă аталанма пулăшма тивĕç. Çакăншăн «Успех каждого ребенка» федераци проекчĕ уйрăмах ответлă теме пулать***

**Çак проект чи малтанах ачана хушма пĕлӳ парассипе, професси суйлама пулăшассипе тата пултаруллă ачасене пулăшассипе çыхăннă. Тĕп задачăсен шутĕнче: хушма пĕлĕвĕн содержанине çултан çул пуянлатса пырасси, вĕренӳ программисен пахалăхне, çав вăхăтрах вĕсен вариативлăхне ӳстересси, инфраструктурăна аталантарасси тата педагогсемпе ертӳçĕсен професси ăсталăхне ӳстересси. Çак задачăсене туллин пурнăçлани ачасене ăнăçлă аталанма май памалла та ĕнтĕ.**

**Муркаш районĕнче хушма пĕлӳ паракан тăвată учреждени ĕçлет: Ача-пăча пултарулăх çурчĕ, Çамрăк техниксен станцийĕ, Ф. Васильев ячĕллĕ ача-пăча искусство шкулĕ тата «Сывлăх» спорт шкулĕ.**

Çак тăвată учреждени те ачасене хушма пĕлӳпе тивĕçтерекен организацисен навигаторĕнче пур. Навигаторта пурĕ 86 программа регистрациленĕ: техникăлла енпе – 17, туризмпа краеведени енĕпе – 7, физкультурăпа спорт енĕпе – 15, художество пултарулăхĕ енĕпе – 33, ыттисем – çут çанталăкпа наука енĕпе.

78 программа ачасен хушма пĕлĕвне уйрăммăн финанслассин программи шутне кĕнĕ. Ача хушма пĕлӳ паракан хăш учреждение çӳренине тата хăш программăпа хушма пĕлӳ илнине кура, ача сертификачĕ тăрăх, бюджетран çав учреждение укçа куçарса параççĕ. Муркаш районĕнче ача



сертификатне пурĕ 1718 панă. Ачасем ытларах техникăлла ене, художество пултарулăхĕпе спорт енĕсене суйласа илнĕ.

Ачасене хушма пĕлӳ паракан учрежденисен хушшинчи эффективлă тытăма туса хурас тĕллевпе Çамрăк техниксен станцийĕнче муниципалитет центрне йĕркеленĕ.

«Успех каждого ребенка» федераци проекчĕ шайĕнче пурнăçланакан «Билет в будущее» проект вара шкул ачисене професси суйласа илессинче пулăшать. Ку проект шкулсенчи вăтам тата аслă сыпăкра вĕренекенсемшĕн усăллă. Шкул ачисем хăйсен кăмăлне тивĕçтерекен, килĕшекен профессие палăртма ятарлă тест çыраççĕ, хăйсене пĕр-пĕр профессире тĕрĕслесе пăхас тĕллевпе мастер-классене хутшăнма пултараççĕ. Мастер-классем республикăри чи лайăх колледжсемпе техникумсенчи пуян опытлă экспертсем ертсе пынипе иртеççĕ. Кунсăр пуçне вĕренекенсем «Проектория» уçă онлайн-уроксене хутшăнма тытăнаççĕ. Çак уроксем те ачана професси суйлавĕнче пулăшаççĕ.

Ку проект 2018 çултах пуçланнă. Икĕ çул хушшинче унăн ĕçне Муркаш районĕнчи пĕр пин ытла ача хутшăннă. Вĕсем хутшăннă тестсен пĕтĕмлетĕвĕ тата ачасем хăйсем килĕштернĕ профессисем строительствăпа, информаци технологийĕсемпе, инженери тата проектсем тăвассипе, транспортпа, логистикăпа çыхăннине кăтартса панă.

Проекта хутшăннă кашни ачана суйласа илнĕ професси енĕпе малалла аталантарса пыма уйрăм вĕренӳ траекторине палăртса панă. Пуласлăха кĕмелли хăйне евĕр билет панă темелле.

«Билет в будущее» проектăн сайтне çĕнетсех пыраççĕ. Унта халĕ ачасемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те хутшăнма пултарать. Сăмахран, тестри ыйтусене хуравласа професси тĕнчинчи килĕшекен енсене пĕлме пулать. Ашшĕ-амăшĕсен йышĕнче тен хушма пĕлӳ е урăх професси илес текенсем те пур. Çавăнпа та ку проект пулăшăвĕпе вĕсенче усă курма пулать.

Ку çулта пирĕн районтан проекта хутшăнакан 1600 ытла вĕренекенĕн те пуласлăха кĕмелли билет илме шанăç пур. Сайтра палăртнă ĕçсене пĕрин хыççăн теприне пурнăçласа пымалла кăна.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Чăваш тĕррин кунĕ**

# Чăваш тĕрри – асамлăх тĕнчи

**Хальхи вăхăтра ăсталанă чăваш тĕрриллĕ япаласем савăнăçлăрах, çутăрах курăнаççĕ. Авалхи сурпансем çинчи чăваш тĕрри вара тĕксĕмрех курăнать пулин те, унра хăйне евĕр мăнаçлăх, çирĕплĕх палăрать. Масмаксем çинчи эрешсем те пĕр-пĕринпе çав тери килĕшсе тăраççĕ, вĕсенче темĕнле асамлăх пур.**

Муркашри Тури чăвашсен музейĕ тата Чăваш наци конгресĕн районти уйрăмĕ ирттернĕ «Чăваш тĕррин ытамĕнче» район конкурсне тăратнă ĕçсем те асамлăх тĕнчине илсе çитереççĕ. Темĕн тĕрлĕ сурпан, масмак, хулçи, пит шăлли илсе килнĕ конкурса. Иртнĕ ĕмĕрти ĕçсемпе юнашар халĕ тĕрленĕ салфеткăсем, сăмса тутрисемпе çивиттисем те пулчĕç. Ачасем кĕнеке хушшине хумалли закладкăна та чăваш тĕррипе илемлетнĕ, йĕп йĕннисене те чăвашлах ăсталанă. Конкурсра авалхи тата 20 ĕмĕрĕн çуррине тĕрлесе илемлетнĕ арçын тата хĕрарăм кĕписем те пулчĕç.

Конкурса хутшăннă 38 çынран кашни уйрăм тав сăмахне тивĕç. «Асанне арчинчен» номинаципе кăна 12 çын хутшăнчĕ. Хăшĕсем пĕр-икĕ япала илсе килнĕ, теприсем темиçе çыннах «арча» уçтарнă – тăваттă-пиллĕкрен пуçласа вунă ытла япала таран пухса илсе пынă.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Лариса Пигенешева, ав, сурпансемпе хĕрарăм кĕпине «арчаран» кăларнă. Пир кĕпене пĕтĕмпех алăпа çĕленĕ. Вăл тури чăваш хĕрарăмĕн пулнине вара вĕтĕрех те тирпейлĕ чăваш тĕрри кăтартса парать. Атăл хĕрринче пурăннăран-ши, унти çынсен сурпанĕ те уйрăлсарах тăрать. Сурпана тĕрлекенĕ шыв тĕсне палăртакан тĕксĕм симĕс, тĕксĕм кăвак çиппсемпе усă курнă. Эрешĕсем вара пур сурпан çинче те пĕр пекрех. Вĕсене тимлĕн тишкерсен чăвашсем çĕр ĕçĕпе пурăннине «вулама» пулать.

Катькас ял тăрăхĕнчи Александра Григорьева 1929 çулта туса хатĕрленĕ сурпана илсе килнĕ. Ăна 1884 çулта çуралнă Феодосия Пожеданова тĕрленĕ-мĕн.

Зинаида Мазуркина та пĕр ĕмĕр ытла типтерлĕн упраннă сурпансене çынсен куçĕ умне кăларнă. Унăн кукамăшĕ Евдокия Кошкина 1914 – 1915 çулсенче тĕрленĕ сурпансем чăнах та хăйне евĕрлĕ – анатри чăвашсен йăхĕнчен тухнă пулас.

Ачасем те хăйсен асламăш-кукамăшĕсене арча уçтарнă. Акă Муркаш шкулĕнче 6в класра вĕренекен Иван Егоров вирьялсен икĕ сурпанне илсе пынă. Вĕсене Шарпаш ялĕнче пурăнакан Мария Петухова 1960-мĕш çулсенче хатĕрленĕ иккен.

Çак вăхăтсенчи сурпансем татах пулчĕç конкурсра. Ятманти Роза Иванова хăйсен тăрăхĕнче пухнă сурпансене чылай илсе килнĕ. Ку вăхăтри сурпансем авалхисенчен самаях уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем çинче ытларах кăвак, симĕс, хура тĕссем тата эрешĕсем те чылай пысăкрах, чечек майлăрах.

Конкурса тăратнă ĕçсем хушшинче чăваш хĕрарăмĕсен калаклă саппунне те, вĕçне чĕнтĕр тыттарнă хĕрарăм кĕписене те курма пулать.

Ачасем хăйсем тĕрленĕ ĕçсене уйрăм номинацире хакларăмăр. Кунта Хурăнкассинчи хĕрсен Ангелина Григорьеван, Надежда тата Екатерина Степановасен ĕçĕсем çинчен чăнах та куç каймарĕ. Вĕсем тĕрленĕ пысăк салфеткăсем çинчи эрешсем питĕ килĕшӳллĕ пулса тухнă. Муркаш шкулĕнче пуçламăш классенче вĕренекен Милана тата Татьяна Павловасен, Ангелина Данилован, Анна Семенован, Виктория Вязован ĕçĕсем те хăйсен çул ӳсĕмне кура чаплă.

Конкурса тăратнă çивиттисемпе пит шăллисене, тумтир çинчи эрешсемпе салфеткăсене тишкернĕ хыççăн Надежда Яковлева тата Алина Лескина чăваш тĕрри çинчен сахал мар пĕлни тӳрех палăрчĕ. Анна Брагина, Надежда Варюхина тунă эрешсем питĕ хăйне евĕрлĕ. Ирина Павлова тĕрленĕ çивиттипе салфеткăсем пĕр ансамбль евĕр. Евгения Кузьминан салфеткине те жюри тӳрех асăрхарĕ: хĕрлĕ тата хура тĕссемпе тунă эрешсен килĕшӳлĕхне пула-ши, вăл, хальхи пек каласан, 3Д салфетка пекех курăнать – питĕ мăнаçлă та чаплă…

Кашни ĕç çинче уйрăммăн чарăнса тăма пулать, паллах, анчах та вĕсене куçпа курнине нимĕн те çитмест. Çак ĕçсенчен хатĕрленĕ курав Тури чăвашсен музейĕнче Чăваш тĕррин кунĕнче – ноябрĕн 26-мĕшĕнче уçăлчĕ. Унпа паллашма май тупăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



